# Ыран – Çул-йĕр хуçалăх ĕçченĕсен кунĕ

**Уяв умĕнхи интервью**

## “Ялсене çулсем ыран мар, паян кирлĕ”,–

**пĕтĕмлетрĕ хăй калаçăвне “Волгодорстрой” УАО генеральнăй директорĕ К. К. ЖАРКОВ.**



***Çул-йĕр строительстви Чăваш Республикин Президенчĕн Н. Федоровăн кăçалхи çурла уйăхĕн 21-мĕшĕнче кун çути курнă “Чăваш Республикин автомобиль çулĕсене тăвассине хăвăрт вĕçлес енĕпе пурнăçламалли ĕçсем” Указĕ хыççăн Чăваш Енĕн социаллă политикин малта тăракан задачи пулса тăчĕ. Çул-йĕр строителĕсем çулсене ытарлăн пурнăç артерийĕсемпе танлаштарнине пирĕнтен кашниех чăнласа ĕненетпĕр. Ахальлĕн епле-ха? Çулсем паян çĕршер ялпа хулана пĕрлештереççĕ, экономика аталанăвĕн никĕсĕ пулса тăраççĕ. Çакна район администрацийĕпе çул-йĕр строителĕсем пĕрешкел ăнланни Муркаш Ене малалла сулăмлăн утма пулăшать те. Районта çулсем тăвассипе, юсассипе, вĕсене пăхса тăрассипе ĕçлекен тĕп подрядчиксенчен пĕри вăл – “Волгодорстрой” уçă акционерлă общество. Район хаçачĕн ял хуçалăх пайĕн ертӳçи Анатолий БЕЛОВ çул-йĕр хуçалăх ĕçченĕсен кунĕ умĕн унăн генеральнăй директорĕпе, Раççей Федерацийĕн хисеплĕ строителĕпе, Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ строителĕпе Константин Кириллович ЖАРКОВПА тĕл пулнă, хăй ертсе пыракан предприятин районти ĕçĕпе паллаштарма ыйтнипе пĕрлех Муркаш Енри çул-йĕр политики çине вăл епле пăхнипе кăсăкланнă.***

**– Константин Кириллович, калаçу тилхепине салтса яриччен май килнипе Сире хăвăра тата предприяти ĕçченĕсене çул-йĕр хуçалăх ĕçченĕсен професиллĕ уявĕпе саламлатăп. Сирĕн ĕçĕрпе куллен майлах тĕл пулнăран тата Эсир ертсе пыракан предприяти ĕçченĕсем хушнă ĕç çине ответлăха туйса пăхнине курнăран “Волгодорстрой” уçă акционерлă обществăн историйĕ те вăрăм та пуян пулнăн туйăнать. Е эпĕ йăнăшатăп?**

– Журналистăн саламне йышăнма хавас. Пысăк тав Сире пире сума сунăшăн.



**“Волгодорстрой” УАОн участок пуçлăхĕн В. Афанасьевăн Муркаш район администрацийĕн капиталлă строительство, архитектура тата пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх управленийĕн тĕп специалисчĕпе Н. Звонковпа сӳтсе явмалли ыйтусем тупăнсах тăраççĕ.**

Ыйтăвăр çине туллин хуравлама 38 çул каяллахи ӳкерчĕкрен пуçлам. Вăл вăхăтра пулнă Чăвашколхозстрой пĕрлешĕвĕн уполномоченнăйĕсен республикăри пухăвĕн 1968 çулхи октябрĕн 9-мĕшĕнчи йышăнăвĕпе Лапсарти ДПМК йĕркеленнĕ. 1997 çулхи майăн 28-мĕшĕнче Шупашкарти Ленин район пуçлăхĕн йышăнăвĕпе ăна “Волгодорстрой” уçă акционерлă общество тесе регистрацилерĕç. Çак хыçа юлнă 38 çул хушшинче тата вĕсенчен 19 çулне хам ертсе пынă вăхăтра пирĕн предприяти республикăра çул-йĕр тăвассинчен пĕрре те айккалла пăрăнман, çултан-çул опыт пухса пынă, паян та çав ĕçрен айккинче тăмасть. Халĕ пирĕн уçă акционерлă общество республикăри çул-йĕр тăвакан чи сумлă организацисенчен пĕри. Пирĕн хăват çулталăкне 100 километра яхăн çĕнĕ çулсем тума çитет. Пирĕн коллектив çĕнĕ çулсем тунипе пĕрлех автоçулсене реконструкцилес, юсас, çул хĕррисене çирĕплетес, искусствăлла пĕчĕк сооруженисем тăвас, шыв пăрăхĕсем хурас ĕçсене ăнăçлă алла илчĕ. Ума лартнă ĕçсене пахалăхлă пурнăçлама пирĕн база та япăх мар. Хамăр харпăрлăхра асфальтпа бетон заводĕсем виççĕ пулни, çул çинче ĕçлемелли техникăна тăтăш çĕнетсе пыни, ĕçре çĕнĕ технологисене çул пани шаннă ĕç умĕнче пуç усма памасть. Çакна çирĕплетекен пĕр тĕслĕх: юлашки 10 – 12 çул хушшинче транспорт инспекцийĕ, Шалти ĕççен министерствин çул-йĕр хăрушсăрлăх инспекцийĕ тата заказчиксем пирĕн ĕçре проект документацийĕнчен тата СниП требованийĕсенчен пăраннă пĕр тĕслĕхе те тупса палăртман. Çакнашкал тăрăшулăхра эпир хамăр ĕçченсене тăтăшах вĕрентсе тăнин тӳпине куратпăр.

Мухтанса мар, анчах каламасăр хăварма çук: пирĕн ĕç никĕсĕ çинче вуншар ялпа хула асфальт çулсемпе çыхăнчĕç. Муркаш Ене илсен, хамăр тунă пĕтĕм çулсене пĕрле хушсан, район тăршшĕпе витĕр тухнă та ĕнтĕ эпир. Пирĕн çакăн пек йĕрке пур: эпир йӳнĕ çулсем тума, ĕçре çĕнĕ йышши техникăпа технологисене çул памасăр укçа-тенкĕ перекетлеме виçесĕр пуянсем мар. Ку сăмахсем, ăнлантăр пуль, пирĕн ĕççене тата тĕллевсене уçса параççĕ. Эсир Муркашран пулнă май çирĕплетсех калатăп: ку таранччен пирĕн строительсем сирĕн районтан уйрăлса кайман. Вĕсем çулленех Муркаш тăрăхĕнче çĕнĕ çулсем тăваççĕ, ваннисене юсаççĕ, пăхса тăраççĕ. Кунта та пирĕн тĕллев – мĕн тунине упрамалла – Муркашсен тăрăшулăхĕпе тӳр килсе пырать. Юлашки çулсенче тата кăçал Чăваш Республикин Президенчĕ кун çути панă указпа



**Акционерлă обществăн планпа производство пайĕн пуçлăхĕ Светлана Алексеевна Арсентьева ĕç калăпăшĕпе паллашсах тăрать.**

килĕшӳллĕн çул-йĕр ыйтăвĕ çине эсир пысăк тимлĕх уйăрни сисĕнет.

**– Муркашсем пирки ыррине каланăран. Сирĕн предприяти Муркаш районĕпе тачă çыхăнса ĕçлесси хăçан пуçланнă? Мĕн илĕртет Сире пирĕн ене, мĕн хăвалать?**

– Хăвалакан пур пулсан, Муркаш районĕпе таччăн ĕçлесси пулмĕччĕ. Шанăç пирки те калаçу катара тăрĕччĕ. Паянхи “Волгодорстрой” уçă акционерсен обществине хам 19-мĕш çул ертсе пынă хушăра пĕрремĕш кунранпах Муркаш районĕпе ĕçленĕ. Муркашсемпе тачă туслашрăм ĕнтĕ, юратма пуçларăм. Çавăнпа та вĕсен ӳсĕмне хамăрăнни пек йышăнатăп. Малтанхи çулсенче районта тунă соцкультбыт объекчĕсене тирпей-илем кĕртессипе ĕçлеттĕмĕр. Вăл вăхăтра ку ĕç, тĕпрен илсен, пирĕн предприяти çинче пулнăран çулсем тунипе пĕрлех тирпей-илем кĕртессипе пĕр вăхăтрах сакăр районта ĕçлеттĕмĕр. Çавăнпа та Муркаш районĕ малашлăхпа пурăнни ун чухнех куç умне пулнăччĕ. Муркашсем çак çула паян кунччен те çухатманни савăнтарать кăна. Сирĕн рай-



**Уйкас Янасал ял тăрăхĕнчи Юрпаш ялĕнче “Волгодорстрой” ĕçченĕсем тунă асфальт çул тăван ен илемĕ пулĕ. Евгений Ермаков, Олег Иванов, Ольга Смородинова, Николай Васильев, Елизавета Соловьева ĕçченсем çул пахалăхĕшĕн тăрăшса ĕçлерĕç.**

онпа тачă çыхăнса ĕçлени пирки калаçнă май пĕр кăтарту илсе парам-ха. 1991 çулхине пирĕн предприятин республикипе 120 соцкультбыт объектне тирпей-илем кĕртмеллеччĕ тата 50 километр çулсем тумалла пулнă. Эпир ăна пурнăçланă. Вĕсен пысăк пайĕ Муркашра пулнă. Вăл вăхăтра сирĕн районта çулленех 7–10 километр çĕнĕ автоçулсем тăваттăмăр. Мĕн илĕртнĕ-ха тата илĕртет пире сирĕн енне? Чи малтанах эсир ĕçшĕн çунни тата пурнăç аталанăвĕнчен юлмасăр пурăнма тăрăшни, ĕçре май пур таран пулăшни, кирлĕ чухне пĕрле ĕçлени те. Пĕрлĕхре вăй тесе чăваш ыт ахальтен каламан-тăр. Эсир çакна çирĕп пăхăнса пурăнни килĕшет мана.

**– Кăçалхи августăн 21-мĕшĕнче ЧР Президенчĕ Н. Федоров республикăра автомобиль çулĕсене тăвассине хăвăрт вĕçлес енĕпе пурнăçламалли ĕçсене палăртса ятарлă указ кăларчĕ. Мĕн шутлатăр Эсир ун пирки?**

– Питĕ кирлĕ указ. Эпир ăна тахçанах кĕтнĕ. Раççейри экономика тытăмĕсем рынок хутшăнăвĕсем çине куçнăран пирĕн чылай хушă ĕççĕр те ларма тиврĕ. Ĕç шыраса республика тулашне кайни те чылай пулчĕ: сакăр çул Тутарстанра ĕçлерĕмĕр. Юлашки çулсенче Чăваш Республики курăмлă вăй илнĕрен хамăр енчех ĕç калăпăшĕ ӳсрĕ. 2004 çулта Чăваш Республикинчех 67 миллион тенкĕлĕх ĕç пурнăçларăмăр, пĕлтĕр – 137 миллион тенкĕлĕх. Кăçал ĕç калăпăшне 200 миллион тенкĕрен те иртterme пăхатпăр. Паллах, пирĕн ĕçĕмĕрĕн пысăк калăпăшĕ Муркаш енче. Кунта район администрацийĕ шанни тата пирĕн вăя ĕненни ĕçлес çула уçать. Çитес çул район территорийĕнче Президент Указĕпе хĕçпăшалланса район администрацийĕ тăрăшнипе Атăл хĕрринче Ильинка тĕлĕнче хăйăрпа вак чул бази уçсан, районта çулсем тăвас хăвăртлăх ӳсмелле кăна. Ун чух вак чул, хăйăр шыраса Шупашкара е Çĕнĕ Шупашкара автомашина хăваламалла пулмĕ. Кунпа пĕрлех Президент Указне пурнăçласа çитес çул автоçулсем тăвассине ӳстерме пăхатпăр. Хальлĕхе çитес çул валли çĕнĕ çулсем тума республикипе 80 километр заказ илтĕмĕр. Çакна эпир тăвайратпăр. Кăçал та ĕçсене планпа пăхнинчен ӳстерме шутлатпăр. Республикипе 19 километр чухлĕ çула ĕçе кĕртрĕмĕр пулин те, çулталăк вĕçлениччен татах 12 километр çул туса пĕтерес ĕмĕтсем пур.

**– Çул çӳрекенсем часчасах çулсен пахалăхĕ**



**Надежда Гайдукпа Ольга Кожанова асфальтобетонщицăсем хушнă ĕçре тăрăшуллă.**

**пирки пăшăрханса калаçнине илтме пулать. Хăвăр тăвакан çулсен пахалăхне Эсир мĕнле хаклайратăр?**

– Ку ыйтăва манăн «пирĕн» е «сирĕн» çине уйăрас килмест. Çакна çеç калатăп: юлашки çулсенче пур çул тăвакансен те ĕç пахалăхĕсем ӳсрĕç. Кунта техника пĕлтерĕшĕ те пысăк. Хамăр предприятие илсен, юлашки 2-3 çул хушшинче ют çĕршывра кăларнă икĕ асфальтоукладчик туянтăмăр. Виçĕ виброплита асфальта алăпа сарнă çĕрте пулăшаççĕ. Асфальт илмелли ют çĕршывра туса кăларнă“Вирдген” фреза - юсав ĕçĕсенче пысăк пулăшуçă. Ĕç пахалăхĕ материал пахалăхĕнчен килнине ăнланса, 8 çул ĕнтĕ эпир карьерти тăмлă хăйăрпа усă курмастпăр. Пирĕн ĕçре юхан шыв



**Ял хушшине сарнă вак чул кĕçех асфальтпа хупланĕ (Юрпаш ялĕ).**

хăйăрĕ кăна. Пахалăха çӳллĕ шайра тытма техника паркне çĕнетсех тăни те пулăшать. Акă, кăçал кăна тĕрлĕрен 21 тĕслĕ техника туянтăмăр.

**– “Волгодорстрой” уçă акционерлă обществăн районти кăçалхи ĕçĕсем мĕнлерех?**

– Малтанах çакна калам. Эпир çулсем тунипе пĕрлех вĕсене пăхса тăрассишĕн те яваплă. Акă, Муркаш районĕнче эпир çулленех 98,5 километр автоçулсем пăхса тăратпăр. Вĕсене çулла юсатпăр, çул хĕррисене тирпейлетпĕр, хĕлле юртан тасататпăр: çула тухакан тикĕс те меллĕ çулпа çӳретĕр.

Çулсем çĕнĕрен тăвасси пирки каласан, кăçал пирĕн 4 километр та 950 метр çулсем хута яма майсем пур. Пирĕн строительсем паян Юрпашра, Пиккикассинче, Çĕлеменкассинче, Ижелькассинче çулсем тăвассипе ĕçлеççĕ. Темĕнле пулсан та ял çыннисем умĕнче пите хĕретмĕпĕр тесе шутлатăп.

**– Тепĕр ыйту: Сирĕн предприятире Муркашсем миçе çын ĕçлеççĕ? Мĕн калайратăр вĕсем пирки?**

– Кăна хăвăр районпа ытларах ĕçленине кура ыйтатăр пулĕ-ха. Хуравлатăп. Пирĕн предприяти, тĕпрен илсен, 297 çынна пĕрлештерсе тăрать пулсан, 21-шĕ – Муркашсем. Вĕсенчен пĕри – планпа производство пайĕн пуçлăхĕ Светлана Алексеевна Арсентьева. Вăл пирĕн патра ашшĕ-амăшĕн ĕçне малалла тăсса чĕрĕк ĕмĕр ĕçлет ĕнтĕ, хăй ĕçĕнче ответлăха туйнипе палăрса тăрать. Сăмах май, унăн ашшĕ Алексей Иванович Иванов каток машинистĕнче 5 çул ĕçленĕ, амăшĕ вара, Клавдия Арсентьевна Арсентьева, çул-йĕр рабочийĕнче – 10 çул. Нихăш енчен те япăхпа палăрман Муркашсен династийĕ. Сирĕн ентеш А. А. Степанов механик та ĕçре хастарлăхпа палăрать. Кашнинех уйрăммăн мухтаса каласа та çитерес çук: пурте маттур, ĕçĕсемпе хастар. Предприяти аталанăвĕнче вĕсен кашнин тӳпи пысăк.

Май килнипе усă курса хамăр патăмăрта ĕçлекен Муркашсене те, ытти ĕçченсене те Çул-йĕр хуçалăх ĕçченĕсен кунĕпе саламлатăп, ырлăх-сывлăхпа ĕçре те пурнăçра ăнăçу сунатăп.